25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942 ОКТЯБРЬ 25 ЫРСАРНИКУН 250 (618 ст.) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Парторганизацисен комсомола куллен пулăшса пырас пулать

М. И. Калинин юлташ ялхуçалăх ĕçĕсенче мала тухса палăрнă комсомолец-колхозниксене 1942 çулти октябрĕн 8-мĕшĕнче Кремльте йышăннă чухне çапла каларĕ: «Халĕ промышленноçра та, ялхуçалăхĕнче те тĕп вăй тенĕ пекех,—тем тесен те ĕççыннин чи активлă, чи хастарлă пайĕ комсомолецсемпе пионерсем пулса тăраççĕ. Вĕсем çине ӳкекен ответлăх халĕ нихăçанхинчен те пысăкрах. Ялта 40 çула çитичченхи арçынсем питех те сахал, пуринчен ытларах ачаллă хĕрарăмсем юлчĕç. Производствăра çитĕнӳсем тăвасси халĕ комсомолран нумай килет. Çавăнпа комсомол çине пăхасси те улшăнчĕ. Халĕ комсомолецсенчен ытларах ыйтмалла».

Вăрçă кунĕсенче комсомол организацийĕсене ертсе пыракансенчен чылайĕшĕ—комсомолăн пуçламĕш организацийĕсен, райкомĕсен, хула комитечĕсен секретарĕсем тăван çĕршыва сыхлама фронта кайрĕç. Комсомол организацийĕсене ертсе пырас ĕçе çĕнĕ çынсем хутшăнчĕç. Вĕсенчен чылайĕшĕ хăйсен ĕçне юратса тума тăрăшаççĕ, çамрăксен пĕтĕм вăй-халне, пултарулăхĕпе ĕçри хастарлăхне фронта ытларах пулăшнă çĕре мобилизацилеме ĕмĕтленеççĕ. Анчах вĕсен ертсе пырас тĕлĕшпе хăнăхулăх тата ĕç опычĕ çителĕксĕртерех-ха. Çавăн пирки хăшпĕр комсомол организацийĕсенче çамрăксене воспитани парас, вĕсене фронтпа çĕршыв валли усăллă ĕç тума мобилизацилес задачăсем час-часах тивĕçлипе пурнăçа кĕрсе пыраймаççĕ е пачах пурнăçланмасăр юлаççĕ. Çавăнпа парторганизацисен комсомол организацийĕсене халĕ нихăçанхинчен те вăйлăнрах пулăшса, ертсе пымалла.

Отечественнăй вăрçăн хаяр кунĕсенче пирĕн республикăри комсомол организацисенчен чылайĕшĕ çĕршывпа фронт заказĕсене пурнăçлама çамрăксене хăвăрт мобилизацилесе пыраççĕ. ВКП(б) райкомĕсем тата пуçламĕш парторганизацисем активлăн пулăшнипе комсомолăн Вăрмар, Елчĕк, Сĕнтĕр, Калинино районĕсенчи организацийĕсем ялти çамрăксене тырпула пухса кĕртес ĕçе кăçал нихăçанхинчен те анлăрах явăçтарма пултарчĕç. Сĕнтĕр районĕнчи комсомолецсем тырпулсене пухса кĕртес ĕçĕн чи ответлă участокĕсенче—машиноведсем пулса 103 çын, çавасемпе тырă выракансем пулса 210 çын, бригадирсемпе звеноводсем пулса 193 çын, колхозсен председателĕсем пулса 6 çын ĕçленĕ. Горючие мĕнле расходланине тĕрĕслесе тăма Елчĕк районĕнче комсомолецсенчен 17 пост организациленĕ пулнă. Вĕсем пулăшнипе МТС кĕске вăхăт хушшинчех 7.836 тенкĕлĕх горючи перекетлесе хăварнă.

Комсомол организацийĕсене пулăшу парас тата ертсе пырас тĕлĕшпе уйрăмнах ВКП(б) Вăрмар райкомĕ аван тĕслĕхсем кăтартать. Унта парти райкомĕн работникĕсем тăтăшах ВЛКСМ райкомĕн бюро ларăвĕсенче пулаççĕ, комсомолăн пуçламĕш организацисен секретарĕсемпе ялхуçалăхĕн тĕрлĕ ыйтăвĕсем тăрăх канашлусем ирттереççĕ, комсомолецсен пухăвĕсене ирттерме пулăшаççĕ, ВКП(б) райкомĕн ларăвĕсенче комсомол организацийĕсен ĕçĕсем çинчен сӳтсе-яваççĕ. Валентин Нагорный суха тăвас ĕçре çĕнĕ меслетпе ĕçлени çинчен пĕлсен, ВКП(б) Вăрмар райкомĕпе ВЛКСМ райкомĕ ку ыйтупа ятарласа колхозсенчи комсомол организацийĕсен секретарĕсен канашлăвне ирттернĕ. Ун хыççăн районри чылай колхозсенче кĕрхи çĕртме тăвас çĕрте Валентин Нагорный меслечĕпе усă курма тытăннă.

Ăçта парти организацийĕсем комсомол организацийĕсен ĕçне тивĕçлипе ертсе пыраççĕ, унта комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксем те вĕсене вăйлăн пулăшса тăраççĕ. ВЛКСМ обкомĕн бюровĕ йышăннă тăрăх, октябрĕн 5-мĕшĕнчен пуçласа ноябрĕн 5-мĕшне çитиччен республикăри колхозсенче выльăх-чĕрлĕх витисене хĕле хатĕрлес ĕçсене вĕçлемелли уйăхлăх пулса иртет. Çак уйăхлăхăн малтанхи вунăкунлăхĕнче Сĕнтĕр районĕнчи çамрăксем (ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Давыдова юлташ) хăйсен вăйĕпе лаша витисем 2, сысна витисем 3, сурăх витисем 4 çĕнĕрен тунă тата лаша витисем 67, ĕне витисем 45, пăру витисем 39, сысна витисем 17, чăх-чĕп витисем 35 юсаса ăшăтнă, 278 пăрăва, 109 сысна çурине тата 94 путеке пăхса çитĕнтерме шефа илнĕ. «Хлебороб» колхозри çамрăксем (комсомол организацийĕн секретарĕ А. Иванова юлташ) выльăх-чĕрлĕхĕн 6 витине юсаса ăшăтнă.

Комсомол организацийĕсене ертсе пырас ĕçе юлашки вăхăтра ВКП(б) Канаш хула комитечĕ те (секретарĕ Лисин юлташ) чылай лайăхлатнă. Унти пуçламĕш парторганизацисем пулăшнипе комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксем Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртура çĕнĕрен-çĕнĕ ӳсĕмсем тăваççĕ.

Анчах комсомол организацийĕсен ĕçне пур çĕрте те тивĕçлипе ертсе пыраççĕ теме çук-ха. Партин Шупашкар, Çĕрпӳ, Чкаловски, Советски, Шăхасан тата Куславкка райкомĕсем комсомол организацийĕсене çителĕксĕр пулăшса тăраççĕ, вĕсен ĕçĕпе сахал интересленеççĕ. Çавна пула, Шупашкар районĕнче вăрçă пуçланнăранпа 25 колхозри комсомол организацийĕсем саланса кайнă. Советски районри комсомол—организацийĕсене ертсе пыма нумай пулмасть халиччен ертсе пырас ĕçре пулман Семенова юлташа суйланă. Вăл ĕçлеме пултарать, унăн ĕçлес ĕмĕчĕ те пысăк, анчах ертсе пыма хăнăхулăх çитмен пирки вăл халĕ комсомол организацийĕн ĕçне çӳлĕ пусăма лартайман-ха. ВКП(б) райкомĕн ăна вăйлăн пулăшса, вĕрентсе пымалла. Анчах халĕ ĕç пачах урăхла тăрать. ВЛКСМ Чкаловски райкомĕ уйăх çурă ытла секретарсăр пулнă. Асăннă ВКП(б) райкомĕсем комсомол организацийĕсен ĕçне вăйлатасси—вăл пирĕн ĕç мар, ВЛКСМ райком секретарĕсен ĕçĕ çеç тесе шутлаççĕ пулас.

Парти организацийĕсем çук колхозсенче партипе правительствăн решенийĕсене пурнăçа кĕртессишĕн комсомол организацисем ответлă пулса тăраççĕ. Анчах партипе правительствăн решенийĕсене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе Советски, Чкаловски, Çĕрпӳ, Шупашкар районĕсенчи чылай комсомол организацисем хăйсен ĕçне ку таринччĕнех палăртаймарĕç-ха. Ку ĕнтĕ ВКП(б) райкомĕсем комсомол организацийĕсене начар пулăшнинчен килнĕ.

Комсомол умĕнче халĕ питех те ответлă задачăсем тăраççĕ. Вĕсене пĕрне те манса хăварма юрамасть, кашнине вăхăтра пурнăçлас пулать. Колхозсенчи комсомолецсемпе çамрăксен Октябрьти Социализмлă Аслă революци 25 çул тултарнă тĕле кĕрхи çĕртме тăвас, авăн çапас, государствăна тырă парас тата выльăх-чĕрлĕхсене хĕл каçарма хатĕрлес ĕçсене вĕçлессишĕн, промышленноçпа транспорт предприятийĕсенчи çамрăксен фронтпа çĕршыв валли ытларах та лайăхрах пахалăхлă продукци туса кăларассишĕн, шкулсемпе техникумсенчи çамрăксен вĕренӳ пахалăхне хăпартассишĕн çине тăрса кĕрешмелле. Çак задачăсене татса пама комсомол организацийĕсен йышне ӳстерес пулать. ВКП(б) райкомĕсемпе пуçламĕш организацисен комсомол организацийĕсене куллен ĕçлĕн пулăшса тăмалла. Комсомолецсен политикăллă пĕлĕвне ӳстересси çине уйрăмах тимлĕн çаврăнса пăхмалла.

М. И. Калинин юлташ ялхуçалăх ĕçĕсенче мала тухса палăрнă комсомолец-колхозниксемпе калаçнă чухне лартнă пысăк задачăсене халех кашни комсомол организацийĕнче тĕплĕн сӳтсе-явса, вĕсене пурнăçа кĕртме мĕнпур комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксен йышлă çарне мобилизацилемелле.

Ăшă тумтирсем пухас ĕç республикăра мĕнле пырать

Республикăри ĕççыннисем фронтри хамăрăн паттăр воинсем валли ăшă тумтирсем пухас ĕçе пĕр чарăнмасăр туса пыраççĕ. Юлашки уйăх çурă хушшинче çеç Елчĕк районĕнче 334 килограмм çăм, 1.013 тир, 63 кĕрĕк пиншак, 130 мăшăр çăматă, 61 мăшăр тир алса, 117 мулаххай, 112 перчатка, 92 ăшă кĕпе тата ытти япаласем чылай пухнă. Вăрмар, Ишлей, Комсомольски районĕсенчи тата Канаш хулинчи ĕççыннисем те ку ĕçе активлăн хутшăнаççĕ.

Анчах ăшă тумтирсем пухас тĕлĕшпе Çĕрпӳ, Вăрнар, Шăмăршă, Сĕнтĕр, Элĕк, Первомайски, Çĕмĕрле районĕсенче комиссисем çаплипех сӳрĕккĕн ĕçлеççĕ-ха.

Çăм, тир тата кĕрĕк пиншаксем пухас ĕçре уйрăмах Вăрнар, Советски, Шăмăршă, Сĕнтĕр, Элĕк, Ишлей, Красноармейски районсем юлса пыраççĕ.

Çăматă пухасси Шупашкар, Çĕрпӳ, Калинински, Куславкка, Кувакино, Первомайски, Çĕмĕрле районĕсенче сӳрĕккĕн пулса пырать.

Комсомольскипе Сĕнтĕрвăрри районĕсенче пĕр мулаххай та пухман, Сĕнтĕр районĕнче те 8 мулаххай çеç пухнă.

Çăм чăлхасем хатĕрлес тĕлĕшпе Тăвай районĕ лайăх тĕслĕхсем кăтартать. Унта 160 мăшăр çăм чăлха çыхса хатĕрленĕ. Çав вăхăтрах Çĕрпӳ, Октябрьски, Шăмăршă тата Етĕрне районĕсенче пĕр мăшăр çăм чăлха та хатĕрлемен.

Вăрмар, Пăрачкав, Комсомольски районсемсĕр пуçне пур районсенче те тепĕ пекех пухнă тирсене тума, çăмран çăматă йăвалама, носкисемпе чăлхасем çыхма тытăнман.

Совет халăхĕ пирĕн мухтавлă боецсемпе командирсем тăван çĕршыва нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларас сехете тем пекех кĕтет. Вăл çĕнтерӳ тума мĕн кирлĕ, çавсене пурне те боецсене ытлăн-çитлĕнех парса тăма хатĕр. Районсенче тата колхозсенче ăшă тумтирсем пухас тĕлĕшпе ĕçлекен комиссисен ку ĕçе куллен, оперативно ертсе пырас пулать. Промышленноçпа транспорт предприятийĕсенче ĕçлекенсене, колхозниксемпе колхозницăсене кашнинех боецсем валли ăшă тумтирсем хатĕрлесе пама хăçтармалла

Совет Информаци Бюровĕнчен

Октябрĕн 23-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Октябрĕн 23-мĕшĕнче пирĕн войскăсем противникпа **Сталинград** районĕнче тата **Моздок** районĕнче çапăçнă. Ытти фронтсенче нимĕнле улшăну та пулман.

Октябрĕн 22-мĕшĕнче противникăн десант антармалли 30 суднипе катерĕ авиаци пулăшса пынипе пирĕн Ладога кӳллинчи пĕр утрав çине десант антарма хăтланнă. Çав утрав çинчи гарнизон тата Хĕрлĕ ялавлă Балтика флотĕн карапĕсемпе авиацийĕ противникăн десантне аркатса тăкнă. Çав çапăçура противникăн 16 суднине пĕтерсе тăкнă тата пĕр суднине тыткăна илнĕ. Сывлăшри çапăçусенче десант антарнă çав районра противникăн 15 самолетне персе ӳкернĕ. Пирĕн карапсен çухату пулман.

* * *

Октябрĕн 22-мĕшĕнче пирĕн авиаци фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче войскăсем турттарса пыракан 20 автомашинăна пĕтерсе тăкнă, артиллерин 2 батарейине тата 10 миномета пусарса лартнă, пĕр поезда çĕмĕрнĕ, противникăн пехотине пĕр рота таран сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинград районĕнче пирĕн войскăсем противникăн атакисене сире-сире пăрахса, хăйсем йышăннă позицисене хăйсен аллинчех тытса тăнă. Артиллерипе тата минометсемпе вăйлăн персе тăрса тата авиаци тапăнса хатĕрленнĕ хыççăн нимĕçсем пĕр завод еннелле тепĕр хут атака тума пуçланă. Противник çав атакăна икĕ полк ытла пехота тата йывăр танксем кĕртсе янă. Пирĕн чаçсем гитлеровецсен атакисене сире-сире яраççĕ, вĕсене пысăк çухатусем кӳреççĕ. Н-ски чаçăн боецĕсем каç пулнă çĕре нимĕçсен 4 танкне персе çĕмĕрнĕ, 7 минометне пĕтерсе тăкнă тата противникăн пехотине пĕр батальона çити вĕлерсе пĕтернĕ. Пирĕн зенитнăй артиллери нимĕçсен 5 самолетне персе ӳкернĕ. Летчик лейтенант Сидоровский юлташ противникăн самолетне хăйĕн самолечĕпе персе ӳкернĕ. Тăшманăн бомбардировщикĕ çĕмĕрĕлсе кайнă.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехри пĕр участокра пирĕн чаçсем противникăн икĕ çирĕплетнĕ пунктне тытса илнĕ. Гитлеровецсем çав участокра умлăн-хыçлăн виçĕ хутчен контратака тунă. Пирĕн пехотинецсемпе танкистсем противника каялла сирсе янă, нимĕçсен 12 танкне çунтарса янă е персе çĕмĕрнĕ, артиллерин 6 батарейине, 19 пулемета тата ултă кĕпçеллĕ пĕр миномета пĕтерсе тăкнă. Çав çапăçура нимĕçсен 1.000 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллерипе çĕр çинчи чаçсем пĕр кун хушшинче нимĕçсен 12 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Моздок районĕнче пирĕн чаçсем хăйсем йышăнса тăракан позицисене хӳтĕлесе тăнă, противникăн атакисене сире-сире янă. Н-ски часть ту çулне тăшманран тасатса, гитлеровецсене пĕр ротăна çити вĕлерсе пĕтернĕ тата çурăмĕ çине япаласем тиенĕ 50 лашана пĕтерсе тăкнă.

Тепĕр участокра пирĕн кавалеристсем противникăн темиçе атакине сирсе ярса ăна каялла чакарнă. Нимĕçсен 100 салтакне çити, пĕр бронемашина, 200 лаша тата 6 автомашина пĕтерсе тăкнă. Снайпер Кулиев юлташ юлашки 4 кун хушшинче 20 гитлеровеца вĕлернĕ.

* * *

Новороссийскран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре совет войскисем противникăн йышлă вăйĕсемпе вирлĕн çапăçнă. Пĕр участокра, пысăк çухатусем тӳссе, гитлеровецсем пăртак малалла кусна. Н-ски высота районĕнче пирĕн подразделенисем контратака тунă та тăшманăн 250 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. Тăшманран 4 оруди, 13 пулемет, 200 винтовка, 2 автомашина, 15 лаша, çурăмĕ çине япаласем тиенĕскерсем, тата ытти тĕрлĕ çар пурлăхĕсем тытса илнĕ.

* * *

Витебск облаçĕнчи партизансен отрячĕ пĕр шоссе çинче засада тунă та противникăн 2 çăмăл тата 4 грузовой автомашинине пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсен 6 офицерне тата 32 салтакне вĕлернĕ. Тепĕр отрядăн партизанĕсем чугунçул çинчи рельссене сӳтсе хунă. Противникăн çав çулпа пыракан çар эшелонĕ чăрăнсассăн, партизансем ун çине пăшалпа тата пулеметпа пеме тытăннă. Нимĕçсен 200 салтакĕ таран вилнĕ е аманнă.

Совет патриочĕсем пĕр чугунçул станцийĕнчен инçех мар вырăнта горючи тултарнă цистернăллă поезда вут тивертекен пульăсемпе пенĕ. Бензин тултарнă 30 цистернăна пĕтерсе тăкнă. Чугунçулăн çав участокĕнче поездсем çӳресси вара темиçе куна чарăнса тăнă.

* * *

Моздок районĕнче кĕрешекен Н-ски чаçăн боецĕсемпе командирĕсен пĕр ушкăнĕ нимĕçсем тыткăна лекнĕ совет çыннисене тискеррĕн асаплантарни çинчен акт çырнă. Вăл актра çапла каланă: «Сентябрĕн 20-мĕшĕнче кĕçĕн сержант Ефим Григорьевич Баравинов юлташ тата красноармеецсем Панченкопа Педуцо юлташсем нимĕçсен йышлăрах группипе çапăçнă. Совет воинĕсем пĕр патрон юлмиччен çапăçнă. Пирĕн боецсем йывăр амансан, нимĕçсем вĕсене тыткăна илнĕ. Гитлерла ирсĕрсем тыткăна лекнĕ красноармеецсене нумайччен асаплантарнă, унтан вара вĕлернĕ. Красноармеецăн Педуцо юлташăн куçĕсене шăтарнă, красноармееца Панченко юлташа çĕçĕпе касса вакланă, кĕçĕн сержантăн Баравинов юлташăн пуçĕ çинчен тирне сӳсе илнĕ». Акта алă пуснă: лейтенантсем В. С. Гоциридзе тата Арвгаладзе, политрук В. С. Моголишвили, кĕçĕн лейтенантсем Ф. Я. Гоцивитицкий тата Н. М. Мисерванидзе, красноармеецсем М. П. Гапредашвили тата В. Г. Дкалашвили.

Октябрĕн 24-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Октябрĕн 24-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противникпа **Сталинград** районĕнче тата **Моздок** районĕнче çапăçнă. Ытти фронтсенче нимĕнле улшăну та пулман.

Пирĕн карапсем Балтика тинĕсĕнче нимĕçсен 10.000 тонна водоизмещениллĕ транспортне путарнă.

* * *

Сталинград районĕнче пирĕн войскăсем противникăн пур атакисене те сирсе янă. Çапăçура нимĕçсен 11 танкне, 13 автоматне, артиллерин 2 батарейине пĕтерсе тăкнă, 13 дзота çĕмĕрнĕ тата нимĕçсен пехотине икĕ ротăна çити вĕлерсе пĕтернĕ. Противникăн автоматчикĕсен ушкăнĕ пĕр заводăн хĕррине кĕрсе кайнă. Пирĕн подразделенисем нимĕç автоматчикĕсен çав ушкăнне пĕтĕмпех пĕтерсе тăкнă. Гвардеец-минометчиксем вăйлăн персе тăрса нимĕçсен 150 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă тата 200 гитлеровеца çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре Н-ски чаçăн боецĕсем противникăн тĕреклетнĕ районне кĕрсе кайнă. Çапăçу хирĕнче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен 240 вилли выртса юлнă. Пирĕннисем 3 оруди, 6 пулемет, минометсем тата винтовкăсем тытса илнĕ. Тепĕр участокра Н-ски стрелковăй часть противникăн контратакине сирсе ярса, румынсен 400 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем тытса илнĕ тата тыткăна илнисем пур. Совет летчикĕсем сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 8 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Моздок районĕнче пирĕн летчиксем противникăн çĕр çинчи вăйĕсене пыра çапнă. 24 автомашинăна пĕтерсе тăкнă, зенитнăй тата минометнăй батарейăсене пусарса лартнă, нимĕçсен пехотине пĕр рота таран сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Новороссийскран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре вăйлăн çапăçнă хыççăн противникăн йышлăрах вăйĕсем пĕр шыв урлă каçнă. Пирĕн войскăсем контратакăсем туса противника чарса тăнă тата ăна пысăк çухату тӳстернĕ. Н-ски подразделенин участокĕнче кăна 180 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. Пĕр высота районĕнче нимĕç автоматчикĕсен ушкăнне çавăрса илсе пĕтерсе тăкнă.

* * *

Хĕвеланăç фрончĕн уйрăм участокĕсенче пирĕн артиллери тата разведчиксем пулеметсен 7 точкине пĕтерсе тăкнă, 6 блиндажа тата противникăн наблюдательнăй пунктне çĕмĕрнĕ. Нимĕçсен 200 салтакпа офицер вилнĕ. Пирĕн боецсем 2 пулемет, пĕр миномет тата темиçе винтовка тытса илнĕ. Совет летчикĕсем противникăн аэродромĕ çинче нимĕçсен 5 самолетне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Смоленск облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ нимĕçсен фашистла захватчикĕсемпе çапăçса, пĕр уйăх хушшинче 1000 гитлеровец таран вĕлерсе пĕтернĕ, пĕр танкетка, темиçе мотоцикл тата автомашинăсем пĕтерсе тăкнă. Смоленск облаçĕнчи партизансен тепĕр отрячĕ нимĕçсен 119 салтакне вĕлернĕ, пĕр танка сирпĕнтерсе янă, 27 автомашинăна тата боеприпассем тиенĕ 6 лава пĕтерсе тăкнă. Çав отрядри партизансен тепĕр ушкăнĕ нимĕçсен хуралне вĕлерсе пĕтернĕ те шыв урлă хывнă кĕпере сирпĕнтерсе янă.

* * *

Воронеж облаçĕнчи Гнилуша ялĕнче нимĕçсемпе венгер захватчикĕсем тунă тискер ĕçсем çинчен хыпар килнĕ. Оккупантсем çав ялти çынсене пурне те шкул çуртне пухса хупнă та алăк патне часовой тăратнă, хăйсем çав вăхăтра çуртран çурта çӳресе колхозниксен пурлăхне çаратнă. Каçпала гитлеровецсем хресченсене шкул çуртĕнчен хăваласа кăларса, вĕсене хăйсен çиелтен тăхăннă тумтирĕсемпе атă-пушмакĕсене хывма хушнă. Мĕнпур тумтире нимĕçсемпе венгерецсем ытти çаратнă япаласемпе пĕрле лавсемпе автомашинăсем çине тиенĕ. Çĕрле гитлерла бандитсем çуртсене çĕмĕре-çĕмĕре кĕрсе хĕрарăмсене пусмăрланă, нимĕн йĕркесĕр хăтланнă. Çĕркаçа фашистла ирсĕрсем 30 колхознике вĕлернĕ, çав шутра — Сергей Дмитриевич Половникова, унăн виçĕ ачине, Вера Алексеевна Мирошникована, унăн икĕ çулхи ывăлне тата 4 çулхи хĕрне тата ытти совет гражданĕсемпе вĕсен çамрăк ачисене персе вĕлернĕ.

* * *

Цехануз — Насельск хушшинчи чугунçул участокĕнче (Польшăра) Польша патриочĕсем нимĕçсен боеприпассем тиенĕ поездне вут тивертекен пульăсемпе пенĕ. Поезда вут тивнĕ те вăл сирпĕнсе кайнă. Взрыва пула 9 вагон çĕмĕрĕлнĕ, 17 вагон рельссенчен тухса кайнă.

Ĕç вăйне тĕрĕс организацилесе пынă çĕрте

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, октябрĕн 22-мĕшĕ. (**Хамăр корр.**). «Красное Сормово» колхоз членĕсем ялхуçалăхĕнчи ĕçсене пысăк çĕкленӳпе туса пыраççĕ. Колхоз уйхирсенчен кĕлтесене кĕртсе капана хывса лартнă, паянхи куна тырăсен 60 процентне çапса амбарсене кĕртнĕ, кĕрхи çĕртме туса пĕтернĕ.

Колхозăн М. Иванов ертсе пыракан бригади уйрăмах лайăх ĕçлет. Бригадир М. Иванов колхозниксен ĕç вăйне вăрçă вăхăчĕ ыйтнă пек организацилесе ертсе пынине пула, бригада ялхуçалăх ĕçĕсенче ытти бригадăсене пример кăтартса ĕçлет. Бригада Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса хăйĕн ĕçне татах та лайăхлатрĕ. 163 гектар çинчи тырпула пуçтарса кĕртсе, сентябрĕн 30-мĕшĕ тĕлне çапса пĕтернĕ, государствăна памалли тырра пĕтĕмпех парса татнă.

М. Иванов юлташăн бригадинче куллен тимлĕн ĕçлеме пултаракан колхозниксемпе колхозницăсем тата çул çитмен çамрăксем пурĕ 80 çын. Вĕсенчен ялхуçалăх ĕçĕнчи стахановецсем—13. Ялхуçалăх ĕçĕсене пĕрне те кая хăвармасăр туса пыма тăрăшса, Иванов юлташ çак вăя куллен ĕçе тĕрĕс вырнаçтарса пырать. Авăн çапнă çĕрте куллен виçĕ звено, çĕрулми кăларнă çĕрте пĕр звено ĕçленĕ. Ытти колхозницăсем кантăр татнă, государствăна пама тырă, пахча-çимĕç турттарнă, бригадăри 3—4 колхозник куллен кĕрхи çĕртме тунă. Çапла, авăн çапас, кĕрхи çĕртме тăвас, государствăна тырă парас ĕçсене ăнăçлăн туса пынă вăхăтрах колхозницăсем икĕ гектар çинчи кантăра татса çапнă, пурĕ 9.000 çурăм кантăра шыва хутса кăларнă, государствăна пĕр центнер сӳс туса панă.

Бригадир ĕçе куллен лайăх йĕркелесе пынипе бригадăри кашни колхозникпе колхозница колхоз производствинче тухăçлăн ĕçлет. Кĕрхи çĕртме тунă çĕрте А. Семеновпа С. Григорьев колхозниксем 8 лашапа талăкра икшер смена ĕçлесе, çĕртме сухине кулленех 6,5 гектар сухаласа пынă. П. Парамонова, В. Петрова, Е. Филиппова, Е. Николаева колхозницăсем хатĕрлев пунктне кашниех икшер лавпа çĕрулми, тырă, пахча-çимĕç турттарнă. Вĕсем хастарлăн ĕçленипе бригада октябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне государство умĕнчи хăйĕн обязательствисене пурне те парса татнă. Авăн çапнă çĕрте В. Зайцев, В. Анисимов, М. Егорова колхозниксем тата авăн аштарнă çĕрте Е. Конькова, М. Николаева, Р. Иванова, пурĕ 10 çын, ĕç нормине кулленех 200—300-шер процент тултарса пынă.

Бригада халь килес çулхи çураки валли вăрлăхсем суртласа хатĕрлеме тытăннă.

С. ШАДИН.

Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту

Малта пыракан бригадăсемпе стахановецсем

КАНАШ. Аслă уява лайăхрах кĕтсе илессишĕн ăмăртса ĕçлесе, вагонсем юсакан заводри бригадăсемпе стахановецсем хăйсен ĕç тухăçлăхне ӳстереççĕ. Паллă слесарь Семен Чесов юлташ ертсе пыракан бригада сменăри нормăна вăтамран 390 процент тултарать. Бригада заводăн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне виççĕмĕш уйăх ĕнтĕ аларан вĕçертмест.

Столяр Алексей Высоцкий юлташăн бригади те пысăк тухăçлăхпа ĕçлет. Унăн бригади иртнĕ вунăкунлăхри заданис 330 процент тултарнă тата лайăх пахалăхлă продукци туса кăларнă.

Чесовпа Высоцкий бригадисенчен юлмалла мар—çакăн пек задача лартнă хăйсем умне столярсен Дмитрий Кованев юлташ ертсе пыракан бригадин членĕсем. Çак задачăна вĕсем чыслăн пурнăçласа пыраççĕ. Кашни сменăрах 400 процент,—акă вĕсен ĕç тухăçлăхĕ. Ĕç пахалăхĕ те вĕсен япăх мар.

Василий Ефимов юлташ ертсе пыракан слесарьсен бригади те хăйĕн нормине 300 процентран кая мар тултарать, уйрăм кунсенче унтан та ирттерет.

Ăмăртура лайăх тĕслĕхсем кăтартса ĕçленĕшĕн Чесов, Высоцкий, Кованев тата Ефимов юлташсен бригадисене заводăн Хисеп кĕнеки çине кĕртнĕ.

Производство мастерĕсем — стахановецсем çак кунсенче питех те тухăçлă ĕçлеççĕ. Утильцехри çамрăк токарь Глыпчак юлташ октябрĕн 10-мĕшĕнчен вара хăйĕн нормине 6 хут ирттерсе тултарать. Инструментальнăй цехри чаплă фрезеровщик Осипов юлташ та нормăна 4 хут ытла тултарать. Кашни сменăрах 2—3-шер норма—çакăн пек ĕнтĕ йывăçсем каскалакан цехри Андронов, кустăрмасем тăвакан цехри Лунев, тимĕрçĕ цехĕнчи Семеновпа Журавский рабочисен ĕç тухăçлăхĕ.

Уяв умĕнхи ăмăртура тăрăшса ĕçлесе стахановецсен ретне тăракансен хисепĕ заводра кунран кун ӳссе пырать. Аслă уява вĕсем фронтпа çĕршыв валли ытларах продукци туса кăларнипе паллă тăваççĕ.

СТАХАНОВЛА ĔÇĔН ТИВЛЕЧĔ

КУСЛАВККА. (**Телефонпа**). «Прогресс» промартель членĕсем уяв ячĕпе илнĕ обязательствăсене пурнăçлассишĕн тăрăшса ĕçлесе пысăк ĕç тухăçлăхĕ кăтартаççĕ. Вера Моисеева, Надя Михайлова юлташсем уйăхри нормăна октябрĕн 17-мĕшĕ тĕлне 200-шер процент, Антонина Маркина юлташ 150 процент тултарчĕç. Рабочисем стахановла ĕçленине пула артель çак уйăхри плана 104 процент тултарчĕ. Уйрăм цехсенчен атă-пушмак юсакан цех малта пырать.

А. ШАРКОВ

Çулйĕр ĕçĕнче

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Район çулйĕр ĕçĕсен 1942 çулхи планне ăнăçлăн тултарчĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем, пирĕн халăх хуçалăхĕнче лайăх çулйĕр мĕнле пысăк вырăн йышăнса тăнине ăнланса, çак ĕçре кăçал нихăçанхинчен хастарлăн ĕçлерĕç. Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ октябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа 10-мĕшĕччен çул çинче ĕçлемелли вунăкунлăх тунă хыççăн пирĕн районри колхозниксем хăйсен çак вăхăтри заданине 200 процент тултарчĕç. Ун хыççăн Чкаловски район участокне кайса, кун çурă хушшинче 200 погоннăй метр çĕр чавса пачĕç. Çак ĕçсенче уйрăмах «Двигатель революции», «Большевик», «Хунав» тата Пушкин ячĕпе тăракан колхозсенчен пынă çынсем пример кăтартса ĕçлерĕç. «Двигатель революции» колхоз членĕсем И. Кадмакова, Т. Линкина, М. Харитонова, М. Корнилова юлташсем, Пушкин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем С. Прокопьева, С. Атласкина юлташсем, «Оборона» колхоз членĕсем З. Терентьева тата А. Пипкова юлташсем çулйĕр ĕçĕнче икĕ уйăха яхăн ĕçлесе, хăйсен нормисене куллен ытлашшипех тултарса пычĕç.

Çулйĕр ĕçĕнче тăрăшса ĕçленĕ стахановецсене пурĕ 90 çынна укçа тата япаласем парса премиленĕ. Вăл шутран Комсомольски ялсовечĕн председательне П. Мурхунов юлташа 200 тенкĕ, «Большевик» колхозăн председательне А. Паровков юлташа 150 тенкĕ парса премиленĕ.

М. КУНИН.

М. И. КАЛИНИН

КАВКАЗШĂН ÇАПĂÇНИ

Нимĕçсен фашистла кĕтĕвĕсем Кавказалла талпăнаççĕ. Тăшман икĕ еннелле хĕссе пырать. Кавказ тăвĕсен хысакĕн айккипе иртсе каяс тесе, вăл Çурçĕр Кавказ чугунçулĕ тăрăх хĕссе пырать, çапăçу унта халь Моздок патĕнче пырать; тата вăл Майкоп—Новороссийск урлă Хура тинĕс хĕрринелле талпăнать.

Нимĕçсем малалла куçса пырасси чакнăçемĕн чакать, пирĕн çарсем хирĕç тăрасси ӳснĕçемĕн ӳссе пырать, нимĕçсене туйăнтармалларах пыра-пыра çапаççĕ. Нимĕçсен сухатăвĕсем ӳссе пыраççĕ, кашни çĕнĕ кун тăшмана иртнĕ кунхинчен пысăкрах сухату кӳрет, нимĕçсем малалла шунă кашни километр вĕсене хаклăраха ларать.

Кавказа тытса илес шухăш вăл—кивĕ шухăш, вăл нимĕç захватчикĕсен тахçанхи хапсăнăвĕ пулса тăрать. 1918 çулта, Германи умĕнче вăл поражени тӳсес хăрушлăх тухса тăнă вăхăтра, Австрин генеральнăй штабĕн начальникĕ Арц хăйĕн пуçлăхне çапла çырнă: «Вăл Мессопотамипе Аравие Бакупа Перси урлă каймалли чи хăрушсăр çула яланлăха хăйĕн аллинче çирĕплетсе хăварасшăн. Çапла тума май пурри Германие уйрăмах та халь, Украинăна оккупациленĕ вăхăтра, илĕртсе тăрать. Хĕвелтухăçне çул Киев, Екатеринослав тата Севастополь урлă каять, унтан Батумпа Трапезундалла тинĕс çулĕ каять. Ман шухăшпа, нимĕçсем çак шутпа Крыма колони тесе шутласа е мĕнле те пулсан урăх майпа хăйсен аллинче хăварасшăн».

Çапла каланă хыççăн Австрин генеральнăй штабĕн начальникĕ пулнă Арц Австрия хăй вăйсăр пулнипе Германие хĕвелтухăçнелле агресси туса пыма кансĕрлеме пултарайманни çинчен нумай çырать. Арц господин Австри правительствине, вăрă-хурахла тытса илнинчен Германия ирĕк панипе мĕн те пулсан ярса илме май пултăр тесе, Германипе «чунтан-чĕререн» килĕштерсе ĕçлеме чĕнет. Çакă интереслĕ: Австрин çар руководителĕсем ун чухне хăйсен çине ӳкекен хăрушлăха—хăйсене [illegible] аркатса тăкассине—курман.

Австрин генеральнăй штабĕн начальникĕн çав документĕнчех çапла каланă: «Çакăн пек шухăшсем (Украинăна оккупацилес шухăш) пуррине генерал-лейтенант Гренер ак çакăн çинчен çесçăнах калани те кăтартса парать: Хĕвеланăçĕнче Германие Англия чарса тăнă пирки Германин тĕп интересĕсем Украинăпа Крым урлă Индие кайма хушса тăраççĕ, тенĕ вăл». Нимĕçсем 1918 çултах хăйсен умне Украинăпа Кавказа, Турцин портне Трапезунда, Кĕçĕн Азири мĕнпур çĕршывсене тытса илес задачăна тата Индие тапăнас задачăна лартнă, урăхла каласан—тĕнчере хăйсем пуç пулса тăрассине пурнăçа кĕртме хатĕрленнĕ.

Халĕ фашистла пичет 1918 çулта нимĕç оккупанчĕсем Кавказра пулни çинчен аса илсе çырать. Нимĕçсен «Дейче Украине цейтунг» хаçачĕ сентябрĕн 8-мĕшĕнче, сăмахран, çапла çырнă: «1918 çулхи апрельре генерал Кресс хăйĕн войскисемпе Константинопольрен Хура тинĕс тăрăх Батума кайнă, унтан Баварин ту отрячĕсене Тифлисран Военно-Грузински çул çине янă, унта çав отрядсем большевизмран сыхласа тăнă. Паян 1918 çул пехиллесе хăварнине пурнăçа кĕртмешкĕн çав вырăнсене нимĕçсен ту войскисем тепĕр хут пырса çитни çинчен шухăшласан, тĕнче историйĕн логикине лайăх ăнланса илес пулать. [illegible]

[illegible] Журналсемпе специальнăй кĕнекесенче вара Германи Кавказа хăйĕн аллинче тытса тăма право пурри çинчен ятарласа çыраççĕ. [illegible] пропагандăна çултан çул сарса пынă, нимĕç обывателĕсен пуçĕсене вуншар çул хушши çав пропагандăпа минкретсе пурăннă. Фашистсем, тĕрĕссипе илсен, çĕннине нимĕн те хушман, вĕсем çав агитацие тата ытларах уртарса янă çеç.

Нимĕç агрессин çак кивĕ планне фашизм мĕн хушса хунă-ха? Фашизм вăрçă вăрçас ĕçре, ытти халăхсемпе сыхăнса тăрас ĕçре вĕçĕ-хĕррисĕр тискерлĕхпе усă курать. Фашистсем гитлерла пуçлăхсен планĕсене, ирĕклĕхе юратакан мĕнпур халăхсене пĕтĕмпех вĕлерсе пĕтерес плансене калама çук тискеррĕн пурнăçласа пыраççĕ; вĕсем аркатаççĕ, терроролаççĕ, хăратмалли майсемпе усă кураççĕ, çыншăн мĕн хаклине пурне те пĕтерсе лартаççĕ, çынсен наци тивĕçлĕхне таптаççĕ, çынсене чурасем туса хураççĕ.

Кавказ халăхĕсем умне вилĕмле хăрушлăх тухса тăчĕ. Лермонтов чунтан юратса çырнă Кавказ çинче халь тăшман самолечĕсем вĕçсе çӳреççĕ. Тусем çине, ту хушăкĕсене, улăхсем çине тăшман, хĕрхенме пĕлмен чăрсăр тăшман, усал та çăткăн тăшман кĕрсе кайма тăрăшать.

Нимĕç генералĕсенчен пĕри, Совет Союзĕн ытти пайĕсенче партизансемпе кĕрешнĕ чух асап тӳссе ăса кĕнĕскер, хăйĕн салтакĕсене çакăн пек кăтартса парать: Кавказ халăхĕсене ытла хытă çаратмалла мар, халăхăн йăлисене тивмелле мар, уйрăмах та хĕрарăмсем тĕлĕшпе асăрханулла пулмалла, мĕншĕн тесессĕн, тет вăл, кунта хĕрарăма мăшкăллани пĕтĕм халăха ура çине тăратма, пĕр шеллемесĕр тавăрттарма пултарать, тет. Анчах та гитлеровецсем пăсса янă салтаксен массине усал ĕçсем тума приказ мар, тупăсемпе пулеметсем тата винтовкăсем çеç чарма пултараççĕ. Çав приказ хăй те тата ултавлăскер çеç: нимĕç генералĕ вăл çаратассине, хĕрарăмсене мăшкăллассине пурне те тытса иличчен, хăйсен вăйĕн тăкакне çĕр хут та ытла ирттерсе саплама май пулса тăриччен каярах хăварма çеç хушать.

Гитлеровецсем вĕсем пĕтĕм тĕнчере ухмахсем пурăнаççĕ, фашистла нимĕç раси çыннисем çеç ăслă çынсем, ыттисене вĕçĕ-хĕррисĕр улталама пултаракансем, тесе шутлаççĕ. Сăмахран, Германири гестапо усă куракан çакăн пек май, акă, ытла та çăмăл май пулса тăмасть-и вара: тыткăна лекнĕ çĕр çынран пĕр-пĕр хăравçă е ĕлĕк уголовнăй ĕç тунă çынна суйласа илеççĕ те ăна пĕр вăхăта уйрăм усраççĕ, лайăх тăрантараççĕ, чăн пурнăçа унран пытараççĕ, унтан вара ăна фронт урлă каçарса яраççĕ, ăна Германи тылĕнчи пурнăçа мухтама, нимĕçсем тунă йĕркесене хитрелетсе кăтартма хушса яраççĕ. Çакна ĕнтĕ çынсем ухмаххи çине шанса тăваççĕ. Анчах та çын ухмаххине шанса тăрса, ху та ухмах пулса тăма пултаратăн.

Кавказ вут-çулăмра, унăн халăхĕсем хăрушлăхра. Вăрă-хурахла фашистла банда аулсемпе станицăсене çĕмĕрсе кĕрет, халăх вăйĕпе тунине пурне те пĕтерсе пырать. Иртĕнсе кайнă нимĕç салтакĕсем стариксемпе ачасене хĕнеççĕ, хĕрарăмсене мăшкăллаççĕ, пусмăрлаççĕ. Тăшман Кавказ çыннишĕн мĕн хаклине пурне те таптать, пĕтерсе хурать. Нумаях та пулмасть-ха Совет Информаци Бюровĕ нимĕçсемпе румын оккупанчĕсем Кабардин-Балкар АССР-ĕнчи Кызбури ялĕнче, халĕ Хĕрлĕ Çар ирĕке кăларнăскерте, тунă усал ĕçсем çинчен çырнă акта пичетлесе кăларчĕ. Гитлеровецсем горецсене вилĕмпе юхăну кӳнĕ. Нимĕçсемпе румын ирсĕрĕсем çав чечекленсе ларакан кабардинец ялне кĕске вăхăтрах тустарса, çĕмĕрсе пĕтернĕ. Нимĕçсемпе румынсем горецсен выльăхĕсене хăваласа кайнă, тумтирĕсене, атă-пушмакĕсене, [illegible] вĕлернĕ. Хĕрлĕ Çар пыра-пыра çапнипе каялла чакнă чухне гитлеровецсем тусем хушшине кайса пытанма ĕлкĕреймен 11 колхозник çемьине тата нумай хĕрсемпе хĕрарăмсене хăйсемпе пĕрле илсе кайнă.

Кавказ халăхĕсем—тĕрлĕ наци халăхĕсем. Эксплоататорсен интересĕсемшĕн çав халăхсем хушшинче темиçе ĕмĕр тăршшĕнче пĕр-пĕрне шанманлăхпа хирĕçӳ сарса пынă. Социализмлă аслă революци ĕçсыннисене капиталистсен пусмăрĕнчен хăтарнă çеç мар, вăл тата ĕçсыннисен куçне уçса панă, çав халăхсем вĕсем пĕр-пĕрин тĕлĕшпе тăшмансем мар иккенне, йăлтах урăхла, вĕсем пĕрлешсе ĕçлесе этеме тивĕçлĕ пурнăç тума пултарнине пĕлсе çитнĕ. Кавказ халăхĕсем çавăн пек пурнăç туса пурăннă та, ăна вĕсем ăнăçлăн туса тăнă. Çав çитĕнӳсене кăтартаканнисем çаксем пулса тăраççĕ: Кавказри пур республикăсем те экономикăпа культура тĕлĕшĕнчен хăвăрт ӳссе пыраççĕ, йышлă заводсем, çулсем, больницăсем, шкулсем, театрсем туса лартнă. Халăхăн культури хăпарнă, пурнăçĕ лайăхланнă; пĕрмаях ӳссе пыракан ĕç тухăçлăхне пула ĕçсыннисен пурнăçĕ пурлăх тĕлĕшĕнчен нумай лайăхланнă. Çакăнта ĕнтĕ совет стройĕпе капитализм стройĕ хушшинчи тĕп уйрăмлăх палăрса тăрать.

Кавказ вăл совет стройĕ халăхăн психологине, унăн характерне çĕнетсе лайăхлатнине кăтартакан чи усăмлă пример пулса тăрать. Кавказ халăхĕсем, кашни хăйне уйрăм пурăнма, ыттисем тĕлĕшпе иккĕленме вĕреннĕскерсем, хăйсемшĕн пур çĕрте те тĕрĕссипе хăрушлăхсем çеç курса тăнăскерсем, обществăллă халăхсем пулса тăчĕç, коллективра пурăнни хăйсемшĕн çирĕп тĕрек пулса тăнине, вăл пурлăх тĕлĕшĕнчен лайăх пурăнассин тата духовнăй пурнăç тĕлĕшĕнчен ӳссе пырассин никĕсĕ пулса тăнине курчĕç. Шкул, клуб, театр, футбол площадки—çаксем пурне те пĕр-пĕринпе тăванлатрĕç, тусем хушшинчи çĕнĕ çулсем, лайăхлатнă транспорт—вĕсене территори тĕлĕшĕнчен те пĕр-пĕрин патне сывăхартрĕç. Халăхсем пĕр-пĕринпе тачăрах пурăнма пуçларĕç, пуринчен те лайăхраххи вăл çакă: вĕсем пĕр-пĕрне кансĕрлемеççĕ, пĕр-пĕрне пулăшса тăраççĕ. Тĕрлĕ халăхлă Кавказ хăйĕн культурин тĕсĕсем тĕлĕшĕнчен, хăйĕн халăхĕсен пурнăç тĕсĕсем тĕлĕшĕнчен темиçе тĕслĕн сăталса тăракан çĕршыв пулса тăчĕ. Кашни халăх хăйĕн уйрăмлăхĕпе палăрса, çуталса тăрать, анчах та çак уйрăмлăх ăна совет çĕрĕ çинче пĕр çемьере пурăнма кансĕрлемен те, кансĕрлемест те; йăлтах урăхла, кашни халăхăн инçене вĕçме çунатсем ӳссе пычĕç. Кавказ унти халăхсемшĕн пĕр аул пек, пĕр станица пек пулса тăчĕ, пĕтĕм совет çĕрĕ вара—пĕр хĕрринчен пуçласа тепĕр хĕррине çитичченех—юратнă тăван çĕршыв пулса тăчĕ. Нацисем пĕр-пĕринпе хирĕçсе пурăнни вырăнне пĕр-пĕрне кăмăлласа пĕр-пĕрне пулăшасси çуралчĕ; ытти халăхсенчен ютшăнса пурăнни вырăнне ялакăх тăванла пурăнасси ӳссе ларчĕ; кашни çын хăйшĕн анчах кĕрешни вырăнне халĕ колхоз хирĕсенче, завод мастерскойĕсенче тата наукăсене, литературăна, искусствăна çитĕнтерес тĕлĕшпе пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Кашни наци, пĕр çемье пулса тăраканскер, хăйĕн культурин çап-çутă сăнĕ, унăн çитĕнĕвĕсем Мускавра Пĕтĕм Совет Союзне курăнмалла çуталса тăччăр тесе тăрăшать, совет çĕршывĕнчи пур халăхсем те вĕсем çине киленсе пăхччăр, вĕсемпе савăнччăр, вĕсене йышăнса илччĕр тесе тăрăшать.

Совет влаçĕ пулнăранпа 25 çул хушшинче Кавказра мĕн пулса иртни тĕлĕнмелле япала пулса тăмасть-и вара? Çапла, вăл тĕлĕнмелле япала пулса тăрать, уншăн Ленин хăйĕн пĕтĕм пурнăçĕ тăршшĕнче кĕрешнĕ, уншăн Сталин кĕрешнĕ тата халь те кĕрешет, уншăн пирĕн парти тăрăшнă тата халь те тăрăшать. Çавсене пурне те ĕнтĕ фашистла агрессор çĕмĕресшĕн, çĕр çинчен шăлса тăкасшăн. Тăшман улталаса тата элеклесе, совет халăхĕсене хирĕçтерсе ярасшăн, хăйĕн ирсĕр ĕçне тума сутăнчăксем тупасшăн. Анчах та Çурçĕр Кавказри халăхсем тата Закавказьери республикăсем тăшмана тивĕçлипе пырса çапаççĕ.

Орджоникидзе хулинче—Çурçĕр Осетин республикин столицинче—граждан вăрçи вăхăтĕнче совет влаçĕшĕн кĕрешсе вилнĕ 17.000 боецăн тăпри патĕнче çак çулхи август уйăхĕнче Çурçĕр Кавказăн халăхĕсен митингĕ пулса иртнĕ. Çав митингра пур нацисем те тата халăхăн пур сийĕсем те пулнă: рабочисемпе колхозниксем, ученăйсемпе художниксем, советпа парти деятелĕсем. Вĕсем пурте, патриотизмлă пĕр хавхаланупа пĕрлешнĕскерсем, Çурçĕр Кавказри халăхсене çакăн пек чĕнсе каланă: «Хамăр çĕре мăшкăллама тата çаратма гитлерла çынçиенсен аллине памастпăр! Хĕрлĕ Çарпа пĕрле кĕрешсе, нимĕçсене Çурçĕр Кавказра çапса аркатма, Совет Союзĕнчи мĕнпур халăхсемпе пĕрле кĕрешсе, таса совет çĕрне гитлерла йытăсенчен тасатма пирĕн пур майсем те пур. Пирĕн хушăра хăравçăсем пулмалла мар. Йĕркелĕхпе çирĕплĕх, дисциплинăпа сыхлăх ытларах пулччăр! Эпир хаяр тăшмана—ылханлă нимĕç захватчикĕсене курайманни таса çулăмпа ялкăшса кайтăр. Пурте фашистла вăрă-хурахсемпе çапăçма!»

Кавказшăн хаяр çапăçу пырать. Фашистла бандăсем юн юхтарса малалла талпăнаççĕ. Хĕрлĕ Çар тăшман хĕснине çирĕппĕн хирĕç тăрать, тăшмана малалла куçма кансĕрлесе, чарса пырать.

Халăх массисем организациленеççĕ, хĕçпăшалланаççĕ, фашистла çарăн тылĕсене пĕр шеллемесĕр аркатса пыраççĕ, тăшманăн чĕрĕ вăйне пĕтерсе пыраççĕ. Çурçĕр Кавказри партизансем противникăн поезчĕсене ӳпĕнтере-ӳпĕнтере яраççĕ, кĕперсене сирпĕнтере-сирпĕнтере яраççĕ, боеприпассемпе горючи склачĕсене пĕтере-пĕтере пыраççĕ. Çурçĕр Кавказра партизансен движенийĕ мĕнле формăсемпе пулса пынине, нимĕç захватчикĕсене таврăракан халăхсем вĕсене мĕн тери курайманнине, акă, çак пример кăтартса парать. Нижний Агбас ялĕнче нимĕç салтакĕсем çул çитмен ача Доду Алиева вĕлернĕ. Вара Алиевăн ашшĕ, пиччĕшĕ, аслашшĕ (вĕсем—чеченецсем), горецсен йăли тăрăх нимĕç çынвĕлеренĕсене тавăрма май килсе тухасса кĕтсе, кĕпер айĕнче тăватă талăк выртнă. Вĕсем тавăрмашкăн çурри броньăланă штаб машинипе пыракан офицерсене суйласа илнĕ. Виçĕ нимĕç офицерне тата икĕ шофера вĕсем шăппăн, систермесĕр пусса пăрахнă, унтан, юнпа тавăрмалли çак ĕçе тусассăн, Алиевсем тусем хушшине кайнă, мĕн виличченех нимĕç захватчикĕсене тавăрса пурăнма тупа тунă. Çавăн пек юнпа тавăрас ĕç тата Псху ялĕнче пулнă. Унта нимĕçсем колхозницăна—кабардинкăна Мзинене çакса вĕлернĕ. Вара унăн упăшки уншăн 4 нимĕçе вĕлернĕ, танмар тытăçура хăй те вилнĕ. Çурçĕр Кавказăн тусем умĕнчи çĕрĕсенче кабардинпа балкарсен партизанла пĕр отрячĕ нимĕçсен 500 салтакĕпе офицерне ытла вĕлернĕ ĕнтĕ.

Çурçĕр Кавказăн оккупациленĕ районĕсенче партизанла вăрçăн çулăмĕ çавăн пек анлăрах та анлăрах ялкăшса пырать. Партизансем хăйсен ашшĕсен—1918 çулхи геройсен—йăлине тытса пырса, нимĕçсене темиçе вунă çул хушши асра тытмалăх сухатусем тӳстерĕç.

Çурçĕр Кавказа хӳтĕлеме Закавказьери республикăсем те çĕкленнĕ. Грузин, азербайджанец тата армян чăсĕсем Хĕрлĕ Çарăн боевой речĕсенче тăрса нимĕç войскисене хытă пыра-пыра çапаççĕ. Закавказьери ĕçсыннисем—рабочисем заводсенче, колхозниксем уйхирсенче—тата интеллигенци фронта ытларах пулăшу памашкăн пĕр канмасăр ĕçлеççĕ. Закавказьери республикăсен халăхĕсем тăшмана çавтери курайманççĕ.

Закавказьери халăхсен представителĕсен нумаях пулмасть пулса иртнĕ фашизма хирĕçле митингĕ чĕнсе каланинче çапла каланă: Закавказьери ĕçсыннисем хăйсен пĕтĕм вăйне нимĕç захватчикĕсене аркатса тăкас ĕçе хурĕç, «Азербайджанăн, Грузин, Арменин ирĕклĕхе юратакан мăнкăмăллă халăхĕсем нихăçан та палач умне чĕркуçланса лармĕç», тенĕ.

Нимĕçсем Кавказ халăхĕсене чура туса хурасшăн, Кавказ урлă Индие кайма çул хывасшăн. Тăшмана вĕлермелле çапмашкăн пирĕн пур майсем те пур. Кавказа нимĕç оккупанчĕсемшĕн вилĕ шăтăкĕ туса хурар!

Танксен „Колхозник Чувашии“ колоннине тума

СĔНТĔР, октябрĕн 24-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри агитколлективсем ĕçсыннисем хушшинче Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем танксен «Колхозник Чувашии» ятлă колоннине тума укçа-тенкĕ пухмашкăн чĕнсе каланине анлăн ăнлантарса параççĕ. Районри колхозсенче çак ĕç валли ик-виçĕ кун хушшинчех 13 пин тенкĕ укçа пухнă. Шашкар ялсоветĕнчи «Аврора» колхоз членĕсем танксен колоннине тума 2.500 тенкĕ пухса панă. Вăл шутра 50 çултан иртнĕ колхозник Морозов юлташ 150 тенкĕ, отечественнăй вăрçăн инваличĕ Храмов юлташ 150 тенкĕ панă.

Танксен колоннине тума укçа пухас ĕçе вăйлатсах пыратпă.

Г. АЛЕКСЕЕВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

КУСЛАВККА. Туканашри «Канаш» колхоз членĕсем Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхозри колхозниксен чĕнĕвне пысăк çĕкленӳпе сӳтсе яврĕç. Чĕнĕве колхозниксен пухăвĕнче вуласа панă хыççăнах танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума колхозниксемпе колхозницăсем укçа хывма тытăнчĕç.

Колхоз председателĕ Матвеев юлташ танксен колоннине тума 500 тенкĕ укçа пачĕ. Бригадир Корсаков 200 тенкĕ, С. Шаркова, Д. Павлов колхозниксем çĕршер тенкĕ пачĕç.

Колхозниксен пухăвĕ танксен «Колхозник Чувашии» ятлă колоннине тума çав пухурах пурĕ 6.550 тенкĕ укçа панă.

А. ШАРКОВ.

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ (Çурçĕр Кавказ). Ӳкерчĕк çинче: Вăрçăччен Грознăй хулинче нефть юхтаракан 2-мĕш заводра рабочи пулса ĕçленĕ сержантăн, халĕ командир пулса тăраканскерĕн, Александр Петрович Аветисянăн противотанковăй орудийĕ лайăх позици йышăннă хыççăн, ял патне тухасшăн хăтланакан тăшманăн танкĕсене перет.
Ф. ИВАНОВ фото ӳкерчĕкĕ. (ТАСС фотохроники).

Пирĕн земляксем

Автоматчик Дмитрий Капитов

Вăл пĕччен 11 нимĕçе тыткăна илнĕ

Нумаях пулмасть почтальон Прасковья Алексеевна Капитова юлташа сургучпа пичетленĕ çыру пырса панă. Прасковья Алексеевна, хутла вĕренмен пулсан та, фронтри ывăлĕ—Дмитрий яракан çырусене уйăрса илме хăнăхса çитнĕ. Фронтăн малти линийĕсенчен çырнăран, вăл хăйĕн çырăвĕсем çинчи адрессене карандашпа çеç çыраканччĕ. Унăн çырăвĕсем яланах виçĕ кĕтеслĕ конвертпа килекенччĕ. Анчах паянхи мĕнле çыру пулчĕ-ха? Адресне машинкăпа çаптарса çырнă, çырăвĕ—тăваткăл, сургучлă...

Мĕн çырнине ăнланман пулин те, Прасковья Алексеевна çырăва темиçе хутчен те çавăркаласа пăхнă. Хĕрĕ ĕçрен таврăниччен çырăва вулаттарса пăхмасăр кĕтме пултарайман вăл. Хавшакскер, почтальон кайсанах, çырăва вулаттарма кӳршĕсем патне тухса чупнă.

— Тем, чĕрем пĕрре те вырăнта мар, çак çырăва вуласа памăр-ши?—тенĕ вăл малтанхи сăмахрах.

Пӳртрисем пурте шăпланнă. Çырăва вулаканăн сасси çеç шăплăха пăсса уççăн янăранă.

«Хисеплĕ Прасковья Алексеевна!

Сирĕн ывăлăр Дмитрий Григорьевич Капитов тăракан чаçăн командованийĕ Сире боевой салампа саламлать тата этемлĕхĕн хаяр тăшманне хирĕç—нимĕç фашизмне хирĕç хăюллăн та пултаруллăн кĕрешекен паттăр ывăл çуратса ӳстернĕшĕн тав тăвать...

Эсир хăвăр ывăлăрпа тивĕçлипех мухтанма пултаратăр. Унпа пирĕн пĕтĕм часть мухтанать.

Д. Капитов хăйĕнчен вăйлăрах тăшманпа тĕл пулнă чухне те хăраса ӳкмест, унпа хăюллăн çапăçăва кĕрет. Йăлийĕ çапла: вăрçăра кам хăюллăрах та чеерех, кам тăшманран хăрамасть—çавă çĕнтерет...»

Çырăва вулакан çак вырăнта кăштах чарăнса тăнă. Прасковья Алексеевнăн ватлăхпа кушăрханă питçăмартийĕ çине савăнăç куççулĕ шăпăртатса аннă. Пӳртри çынсем ăна пурте асăрханă, геройăн амăшĕ çине ăшă кăмăлпа тинкерсе пăхнă, унпа пĕрле пысăк савăнăçпа савăннă.

«...1942 çулхи сентябрĕн 10-мĕшĕнчи çапăçура,—тесе çырнă çырура малалла,—Сирĕн ывăлăр Дмитрий хăй пĕччен 11 нимĕçе тыткăна илнĕ, вĕсене пурне те штаба илсе пынă. Нимĕç захватчикĕсене хирĕç кĕрешнĕ çĕрте хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн ăна Правительствăн пысăк наградипе—Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе наградăланă...»

Фашистла ирсĕрсем тăван çĕршыв çине вăрă-хурахла тапăнса кĕнĕ хыпар, Совет Союзĕнчи мĕнпур ĕçсыннисене тарăхтарнă пекех, Хусан чугунçулĕн Канаш станцинчи материальнăй склачĕн кладовщикĕ пулса ĕçлекен Дмитрий Григорьевич Капитова та тарăхтарнă. Вăл, станцири комсомол организацин секретарĕ, часах çамрăксен пухăвне пухнă.

— Юнĕçен Гитлер тата унăн вăрă-хурахла ушкăнĕ пирĕн телейлĕ çĕршыв çине тапăнса кĕчĕç,—тенĕ вăл хумханнă сасăпа.—Тăшмана хирĕç кĕрешме пĕтĕм совет халăхĕ çĕкленчĕ. Манăн малашне тек тылра юлма халăм çук, эпĕ ыранах хам ирĕкпе фронта каятăп. Эсир те, хĕрачасем,—тенĕ çамрăк патриот пухури комсомолкăсем еннелле пăхса,—паянтан пуçласа хăвăра фронтри пек тытăр, кунĕн-çĕрĕн, вăхăта шута илмесĕр ĕçлĕр...

Пуху хыççăнах Капитов ВЛКСМ Канаш райкомне кайнă. Секретарь кабинетĕнчен çын татăлман. Çирĕп шăмшаклă, тĕреклĕ çамрăксем, фронта хăйсен ирĕкĕпе кайма кăмăл тунăскерсем, ВЛКСМ райкомĕн секретарьне канăç паман, хăйсене хăвăртрах фронта яма ыйтнă. Вĕсем хушшинче хулари пожарнăй командăра ĕçлекен Изюмов, чаплă физкультурник Петя Куклов, Мельников, Капитов юлташсем пулнă.

— Ыранах тухса каятăр, юлташсем. Военкоматпа калаçса килĕшрĕм,—пĕлтернĕ секретарь.

Çамрăк патриотсем тинех лăпланнă, райкомолран савăнăçлăн тухса утнă.

Комсомолец Дмитрий Капитова комисси автоматчиксен шкулне вĕренме илнĕ. Вăл унтан кĕске вăхăт хушшинчех вĕренсе тухнă. Автоматчик пулнăшăн вăл темĕн пекех савăннă. Автомат унăн кăмăлне килнĕ. Мĕншĕн тесен автоматран пени ручной пулеметран пенинчен пĕрре те, кая пулман, çитменнине вăл тăракан чаçăн питех те кирлĕ, питех те ответлă заданисене пурнăçламалла пулнă. Çав ротăра халĕ пирĕн паттăр земляк автоматчик-сержант Дмитрий Капитов çĕршыв умĕнчи хăйĕн тивĕçне тӳррĕн пурнăçлать те ĕнтĕ.

Хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, кăçалхи сентябрĕн 12-мĕшĕнче Хĕвеланăç фронтĕн малти линийĕнче Н-ски армин Военнăй Совечĕн членĕ бригаднăй комиссар Русских, СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ хушнипе, награда илнĕ боецсемпе командирсене орденсемпе медальсем панă. Çав кун пирĕн земляк Дмитрий Капитов та Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕ илнĕ. Правительствăн пысăк наградине илсе, вăл фронтри юлташĕсем умĕнче нимĕç захватчикĕсене хирĕç татах та хăюллăнрах кĕрешме, совет çĕрĕ çинче пĕр нимĕç юлмиччен геройла кĕрешме тупа тунă.

Мухтав сана, пирĕн герой—земляк!

П. НИКОЛАЕВ.

Ют çĕршывсенче

ЮГОСЛАВИ ПАРТИЗАНĔСЕН АКТИВЛĂ ĔÇĔСЕМ

ЖЕНЕВА, октябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Югославирен килнĕ хыпарсем тăрăх, октябрь уйăхĕн варринче Яйце тата Мрконичград районĕнче хаяр çапăçусем пулса иртнĕ. Вĕсем виçĕ куна пынă. Партизансем пысăк çитĕнӳ тунă—вĕсем виççĕмĕш хут Ключ тата Мрконичград хулисене тытса илнĕ. Çак хуласене партизансем тăшман юлашки хут наступлени тунă чухне сухатнă пулнă. Ключ патĕнчи çапăçусенче нимĕçсен полкне пĕтĕмпех çапса çĕмĕрнĕ. Усташа бандисем те чылай пысăк сухатусем тӳснĕ. Противник Сански Мост тата Баня-Лука хулисем патнелле чакать. Ытла нумаях пулмасть партизансен отрячĕ Яворник тата Ясериц станцийĕсем хушшинчи чугунçула тапăннă, чугунçула 15 километр тăршшĕнче пăсса хунă. Партизансем çар материалĕсем нумай тытса илнĕ тата 25 çынна тыткăна илнĕ.

Черногорире партизансен çĕнĕ батальонĕсене тунă. Çак уйăх пуçламĕшĕнче çав батальонсенчен пĕри Даниловград тата Никшич хулисем хушшинчи çул çинче выртакан Богатич местечка патĕнче итальянецсен колоннине тапăннă, тăшмана туйăнмаллах пысăк сухатусем тӳстернĕ. Итальянецсен 5.000 яхăн салтакĕ тата 250 усташа Карауле тăвĕ çинче партизансен батальонне тапăннă, анчах та пысăк сухатусем тӳссе каялла чакнă.

Далмацири партизансен отрячĕсем, темиçе участокра наступлени туса, территорин пĕр пайне итальянец оккупанчĕсенчен тасатнă.

ФРАНЦИРИ ЙЫВĂР ЛАРУ-ТĂРУ

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Виширен тата Парижран килнĕ хыпарсем тăрăх, Францире Виши правительствипе халăх хушшинче çивчĕ кĕрешӳ пулса пырать. Иртнĕ эрнере Лавальăн легионерĕсем, пулеметсемпе хĕçпăшаллантарнă мотоциклетсем çине ларса, хумхану пулса иртнĕ пунктсенче хуралласа çӳренĕ. Корреспондент, пĕлтернĕ тăрăх, легионерсем Францин оккупацилемен зонинчи контроле кунран-кун вăйлатаççĕ. Виши правительстви çине тăшманла пăхакан çынсене тупас тесе, вĕсем провокациллĕ выступленисем те тăваççĕ пулас. Хресченсем продовольствие тата хĕçпăшала пытараççĕ.

ХАЛĂХ ÇИЛЛИ ВИШИН СУТĂНЧĂК ШАЙККИНЕ КАÇАРМĔ

ЛОНДОН, октябрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). «Марсейез» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Францире вăрттăн тухса тăракан «Фран Тирер» тата «Попюлер» хаçатсем Петэна суда пама ыйтаççĕ. «Фран Тирер» хаçат çапла çырать: «Вишири старик чĕтресе тăтăр. Халăх çилли ăна унăн министрĕнчен Лавальран уйăрса тăмĕ, часах вăл вĕсене пĕрле хăйсен юлашки çулĕпе ăсатĕ».

«Бордона тарнă хыççăнхи пур правительствăсене те, çавăн пекех тата вĕсене хăйсен намăс ĕçне тума приказ панă Петэна та Франци представителĕсем тесе йышăнмастпăр, — тесе çырать «Попюлер» хаçат. — Эпир вĕсене государствăна сутнă тесе айăплатпăр, вĕсене наци шутĕнчен кăларса пăрахатпăр. Вĕсене наказани памалла, наказани парĕç те».

Чилири çĕнĕ правительство

ЛОНДОН, октябрĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин корреспонденчĕ Сант-Ягоран (Чилирен) пĕлтернĕ тăрăх, октябрĕн 22-мĕшĕнче Чилин çĕнĕ правительствине туса çитернĕ.

Чили президенчĕ Риос манифест кăларнă. Çав манифестра вăл политикăллă пур партисене те правительствăпа çыхăнса ĕçлеме чĕнет. Чилин ытти государствăсем тĕлĕшпе тытас позицийĕ çинчен Риос çапла каланă: «Чили Америка континентĕнчи мĕнпур республикăсен енче пулать, вăл территорие тĕкĕнмелле мар текен принципа тата Америкăри пĕрлухăшлăх текен принципа хӳтĕлесе пырат».

«Критика» хаçат çапла калать: çĕнĕ правительство тĕнĕл держависемпе çыхăну тытма пăрахассишĕн тăрать, тет.

—○—

Пĕлтерӳ

Октябрĕн 25-мĕшĕнче, вырăнти вăхăтпа 15 сехетре, Шупашкар хулинче Октябрьти социализмлă аслă революци 25 çул тултарнă ятпа республикăри çамрăксен митингĕ пулать.

Митинга радиопа трансляцилеççĕ.

ВЛКСМ Чăваш Обкомĕ.

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары. ул. Володарского, 5 Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 996 Типографи № 1 Управлении полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2. Ф 6. 58 84 п. л.